**Июлĕн 6-мĕшĕ – Чăваш милицийĕн кунĕ**

# Йĕрке хуралçисемпе дежурствăра ирттернĕ пĕр талăк

**(июлĕн 2-мĕшĕ)**

6 сехет те 45 минут. Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Евгений Дмитриевич Макаров ĕçе çитрĕ. Унччченхи талăкра дежурствăра тăнă Валерий Петрович Леонтьев дежурнăй пуçлăха лару-тăрупа паллаштарчĕ. Дежурствăна паян кĕрекен Александр Анатольевич Иванов милици майорĕ кашни хыпара тăнласа итлерĕ. Урăхла епле-ха, пуçăннă ĕçе унăн малалла тăсмалла-çке.



**Милици майорĕ, оперативлă дежурнăй Александр Анатольевич Иванов шалти ĕçсен пайĕнче 1993 çултанпа. Пысăк опытлă оперативникăн кашни ыйту çинех тивĕçлĕ хурав пур.**

7 сехет. Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн кабинетĕнче дежурство парас-илесси пуçланчĕ. Çĕнĕ дежурнăйăн А. Ивановăн мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла-ха, хăш преступленисене уçса парассипе тĕллевлĕрех ĕçлемелле, дежурствăна çӳллĕ шайра ирттерме тата граждансен ыйтăвĕсене тивĕçтерме пурте пур-и-ха? Ыйтусем нумай. Вĕсене татса пама вырăнти ĕç условийĕсем пурте çитеççĕ. Ĕçе кӳлĕнмелле кăна.

7 сехет те 20 минут. Мускав – Хусан автоçул çинче Хыркассинчи милици постĕнче 6 сехет те 30 минутра пирĕн районти Москакасси каччине «Газель» автомашинăпа металлолом турттарса кайнă чух чарнă. Муркашра унччченхи кун металл вăрланă тĕслĕх пулнăран ку машина тĕлĕшпе хушма тĕрĕслев ирттерме ăна Муркашри шалти ĕçсен пайне янă.

8 сехет. Шалти ĕçсен пайĕн ларусем ирттермелли пӳлĕмĕнче Е. Макаров личнăй составпа черетлĕ ĕç кунĕн планне пăхса тухассине пуçларĕ. Кашнийĕнех умри тĕллевсем паллă. Никамăн та алă усса ларма вăхăт çук. Уйрăм тимлĕх металл вăрлакан-турттаракансем тĕлĕшпе. Акă июнĕн 30-мĕшĕнче 11 сехетре шалти ĕçсен пайне предприниматель патĕнчен 6 мм хулăнăш металл шăвăççене чылай вăрласа кайни çинчен пĕлтернĕ. Ку преступление уçса парасси – малтанхи тĕллевсенчен пĕри. Сăмах май, çакăн пирки пĕлекен граждансем те ун çинчен шалти ĕçсен пайне пĕлтерме пултараççĕ. Хыпарлаканăн вăрттăнлăхне гарантилеççĕ, хавхалантару та айккинче юлмĕ. Çапла шантараççĕ шалти ĕçсен пайĕнче.

9 сехет те 40 минут. Мăн Сĕнтĕрти А. гражданка хăйсен подъездĕнче кӳршĕре пурăнакан В. харкашу пуçарса хваттер алăкне çĕмĕрни пирки пĕлтерчĕ. Дежурнăй ушкăнпа вырăна тухрăмăр. Шăнкăрав тĕрĕсси куç умĕнче. «Паттăр» гражданина шалти ĕçсен пайне «уçăлма» илсе килме тиврĕ. Саккун умĕнче ответ тытасси паян уншăн куç кĕрет.

11 сехет те 10 минут. Шупашкарти 5-мĕш хула больницине пирĕн районти «Просвещенец» коллективлă садра чĕр куççисемпе хул пуççисене амантнă В. Алтунин медицина пулăшăвĕ ыйтса пынă.

12 сехет те 10 минут. Р. гражданка июнĕн 1-мĕшĕнче 2 сехетре хăйсен хуçалăхĕн сарайĕнче пĕр ял çынниех хăйне мăшкăллани пирки пĕлтерчĕ. Оперативлă ушкăн çийĕнчех вырăна тухрĕ.

13 сехет те 45 минут. Тури Олкашра пурăнакан С. Шупашкарта пурăнакан А. гражданина хăйĕн аллине юри чĕрсе янăшăн уголовнăй майпа айăплама ыйтать. Мĕн пулнă? Тĕрĕслес пулать. Милиционерсем каллех ĕçре.

16 сехет те 05 минут. Хорнуй ялĕнче пурăнакан М. гражданка утă çинче ĕçленĕ чух хăйĕн çухалнă паспортне шыраса тупма пулăшма ыйтать.

16 сехет те 40 минут. Р. гражданка хăйне мăшăрĕ хĕненĕ тĕслĕхпе пуçланă ĕçе хупма ыйтать. Çемьере ахăр самана пуçаракан – шалти ĕçсен пайĕнчи ятарлă камерăра.

16 сехет те 50 минут. Муркашра пурăнакан С. гражданин июнĕн 15-мĕшĕнче хăйĕн асăрханусăрлăхĕпе çухатнă кĕсье телефонне тупма пулăшма ыйтать. Сăмах май, кунашкал тĕслĕхсем шалти ĕçсен пайĕнче сахал мар. Тивĕçлĕ мерăсем йышăннипе телефонсем тупăнни те куç умĕнчех.

20 сехет те 05 минут. Шупашкарти ĕçре Михаил ятлă прораб хĕненĕ хыççăн пуç хытă аманнипе, питсем çинчи сурансемпе, хуçăк аяк пĕрчисемпе районти тĕп больницăна Чамăшра пурăнакан 40 çулхи арçынна илсе çитернĕ.

20 сехет те 45 минут. Хăйне кӳршĕре пурăнакан 37 çулхи В. гражданин сăмахпа вĕлерессипе хăратнă тĕслĕхпе пуçарнă тĕрĕслеве Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан А. гражданка хупма ыйтать.

20 сехет те 50 минут. Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан А. гражданка ку хутĕнче хăйне июнĕн 27-мĕшĕнче урамра хăйсен тĕлĕнче 22 сехетре усал сăмахсем каланăшăн кӳршине тата унпа пĕрле пурăнакан М. гражданкăна административлă майпа айăплама ыйтать.

Вăт çапла. Йĕрке хуралçисемпе дежурствăра ирттернĕ талăк шалти ĕçсен пайĕ тăтăш ĕçре, йĕрке сыхлавĕнче пулнине кăтартса пачĕ. Çак талăкра пулнă ытти ĕçсемпе юнашар статьясемпе хыпарсенче паллашма пултаратăр.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# «Иртнине манмастпăр, ыранхишĕн тăрăшатпăр»

***Çапла пуçларĕ хăйĕн калаçăвне республика кунне Муркашра ирттернĕ чух обществăлла йĕркелĕхе çӳллĕ шайра тытнăшăн районти шалти ĕçсен пайне республика шайĕнчен ыр суннă Тав çырăвне шалти ĕçсен пайне илсе кĕнĕ май районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Евгений Дмитриевич МАКАРОВ.***




**– Ку ӳсĕм пĕр кунта пулнă теес килмест. Çак хăйне евĕр кăтартура районти шалти ĕçсен пайĕн кулленхи ĕçĕ, вăл халăх умĕнче шанчăклă пулни курăнать. Мĕнле шутлатăр кун пирки?**

– Сирĕн шухăшсене хирĕçлеместĕп. Тивĕçлĕ ĕçшĕн тав тунине илтме те кăмăллă. Çакă пирĕн патăмăрта ĕçлекен кашни ĕçчене хăйĕн тивĕçне татах та ответлăрах пурнăçлама хистет. Вăл çапла пуласса эпĕ шанатăп. Кунпа пĕрлех май килнипе эпĕ тĕрлĕ çулсенче хамăр патăмăрта ĕçленисемпе ветерансене тата вĕсен тăванĕсене, паян йĕрке хуралĕнче вăй хуракансемпе вĕсен çемйисене Чăваш милицийĕн кунĕпе саламлатăп, хăвăр суйласа илнĕ ĕçре ответлăха çирĕп туйма, лартнă тĕллевсене туллин пурнăçлама вичкĕн ăс, çирĕп сывлăх, тулли кăмăл, вăрăм ĕмĕр сунатăп. Эсир пуррипе тата хăвăра шаннă ĕçе яваплăха туйса пурнăçланипе общество малалла аталанать, çынсен пурнăçĕ çĕнĕ шая çĕкленет, экономика вăйланать т. ыт. те.

**– Сирĕн салама илтме кăмăллă. Истори тенĕрен, Чăваш милицийĕн кунĕ умĕн районти йĕрке хуралĕн иртнĕ кун-çулĕпе паллаштармăр-ши? Иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук.**

– Чăваш милицийĕпе пĕрлех пирĕн истори те вăрăм та пуян. Унăн çулĕ çинче çĕршывпа республика аталанăвĕн кашни утти палăрать.

1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районне йĕркелесе хурсанах обществăри йĕркелĕх пирки ыйту малти вырăна тухса тăнă. Пурнăç малалла каять, кĕтме юрамасть. Çапла вара февралĕн 22-мĕшĕнче Муркаш район милицийĕ йĕркеленет. НКВДăн районти уйрăмĕн пĕрремĕш пуçлăхĕ пулма ШĔМ министрĕн приказĕпе Андрей Алексеевич Ломоносова, Мăн Сĕнтĕрти НКВД уйрăмĕн пуçлăхĕ пулма Григорий Николаевич Кудряшова çирĕплетеççĕ.

Пурнăç улшăнăвĕсенчен районти милици те айккинче тăрса юлаймасть.40-мĕш çулсем вĕçĕнче патшалăх хăрушсăрлăх министерствин районти пайĕ йĕркеленет. Ăна 1949 çулхи январĕн 5-мĕшĕнчен пуçăнса Алексей Николаевич Беляев ертсе пырать. Вăл вăхăтра район милицийĕн пуçлăхĕнче Василий Матвеевич Беляев тăрать. Районти милици пайĕнче ун чух 16 çын пулнă.

1956-1962 çулсенче район милицине Роман Романович Романов ертсе пынă. 1964-1966 çулсенче – Яков Иванович Анашкин, 1966-1971 çулсенче – Иван Васильевич Сергеев, 1971-1977 çулсенче – Зиновий Тимофеевич Борисов, 1977-1988 çулсенче Юрий Григорьевич Соловьев, 1988-1995 çулсенче – Николай Михайлович Тимофеев, 1995-2001 çулсенче – Александр Леонидович Бочкин, 2001-2004 çулсенче – Эрнст Ксенофонтович Венедиктов. Мана хама çак ĕçе шанни те 4 çул пулать ĕнтĕ. Çак хушăра района лайăх пĕлсе çитрĕм. Муркаш Енре ĕçчен те пултаруллă çынсем пурăнни пирки иккĕленӳ çук. Ĕçлеме те пĕлеççĕ, пурнăçне те пĕлсе йĕркелеççĕ. Çавăнпах йĕркене пăсасси те иккĕмĕш вырăна тухса пырать. Анчах эпир лайăх тесе алă усса лармастпăр.

**– Сирĕн историре Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи те хăйне евĕр йĕр хăварнă.**

– Вăл çулсем – Раççейăн тӳрленми суранĕсем. 1941-1945 çулсенче районти шалти ĕçсен пайĕн 36 ĕçченĕ фронта кайнă, чылайăшĕ çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пуçĕсене хунă. Вĕсенчен пĕри – Алексей Романович Логинов – 1943 çулхи сентябрьте фронтра Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пуçне хунă. СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕпе ăна 1944 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче СССР Геройĕн ятне панă.

Çав хăрушă çулсенче те, каярахпа та районти милици ĕçченĕсем хăйсене çĕршыв шанса панă ĕçе пурнăçа шеллемесĕр туллин пурнăçланă. Вĕсем яланах пирĕн асра пулĕç. Милицин участокри инспекторĕ Леонтий Михайлович Разумов 1946 çулта Шупуçĕнче преступник аллинчен вилнĕ, Владимир Егорович Князев милиционер 1947 çулта уйрăмах хăрушă преступнике тытса чарнă чух пурнăçпа сыв пуллашнă, преступник аллинчен тата служба тивĕçĕсене пурнăçланă чух 1980 çулта Валерий Германович Николаев, 1993 çулта Иван Николаевич Илларионов, 1998 çулта Сергей Вячеславович Голубев, 2002 çулта Владимир Петрович Федоров, 2002 çулта Сергей Витальевич Архипов пурнăçран уйрăлнă.

Паян та шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем йывăрлăхсенчен хăраса тăмаççĕ, çĕршыв умĕнчи чыса тивĕçлипе пурнăçлаççĕ. РФ Президенчĕн 1997 çулхи январĕн 20-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн районти милиционерсенчен чылайăшĕ Çурçĕр Кавказри йĕркелĕхе сыхлама хутшăнчĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ çĕршыв наградисене тивĕçрĕ.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

# Кредит мыскари

Çĕршыв ял хуçалăхĕ çине пăхмасть тесе нумай сас-хура тунă хыççăн Раççей Федерацийĕ çак ыйту çине тимлĕх уйăрма пуçласан, çĕнĕ çăмăллăхсемпе йĕрке пăсма «васкакансем» те тупăнчĕç. Район хаçачĕн журналисчĕ шалти ĕçсен пайĕнче дежурствăра пулнă кун Чăваш Республикин ШĔМĕн экономикăлла преступленисемпе кĕрешессипе районти оперативлă шырав чаçĕн пуçлăхĕ И. Илларионов хăйĕн сотрудникĕсемпе «АПК аталантарасси» наци проектне районти хуçалăхсем епле пурнăçланине тĕрĕслерĕ. Куç умне нацпроектпа паракан кредитпа тĕллевсĕр усă курни тухрĕ. Пĕр хуçалăх (ятне суд пулсан пĕлтерĕпĕр) «Россельхозбанкран» кĕске вăхăтлăх усă курма тесе 2005 çулхи чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче 1200000 тенкĕ, нумай вăхăтлăха 4700000 тенкĕ илнĕ. Тĕрĕслев хуçалăх пĕтĕмпе 780000 тенкĕ кредитпа тĕллевлĕ усă курманнине тупса палăртрĕ. Çав вăхăтрах хуçалăх ЧР бюджетĕнчен 31562,11 тенкĕ субсиди тĕрĕс мар илнĕ.

# Тимлĕх тени кашнин пулмалла

Пурнăçăн хăвăрт улшăнăвĕнче автомобиль çулĕсем çине тухакан техника хатĕрĕсен хуçисемпе çуран çӳрекенсем çул-йĕр правилисене пĕр çын пек пăхăнсан çĕнĕ малашлăх уçăлать. Ăна пурте пĕлетпĕр, анчах йĕркене пăснă вуншар тĕслĕхре техника ванать, çунса кĕл пулать, çынсен пурнăçĕ татăлать.

Календарь çинче утă уйăхĕ. Кăçалхи 6 уйăхра район территорийĕнчи çулсем çинче 24 авари пулнă (пĕлтĕр – 31). Вĕсенче 33 çын аманнă, 5 вилнĕ. Çакă, паллах, шухăшлаттарать. Çавăнпа та патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторсем хăйсен ĕçне самантлăха та хăй еккипе ямаççĕ. Хăйсен вăйĕнчи ВАЗ маркăллă икĕ автомашинăпа вĕсен июлĕн 2-мĕшĕнче те çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха тивĕçлĕ шайра тытассипе ĕçлесе ларса-канма та вăхăт пулмарĕ.

Çул-йĕр хăрушсăрлăх патшалăх инспекцийĕн инспекторĕ Г. Терентьев июлĕн 2-мĕшĕнче çулсем çинче ирттернĕ тĕрĕслевре руль умĕнче ӳсĕр пулнă пĕр водителе, водитель прависене «манса хăварнă» виçĕ каскадера, çул-йĕр правилисене пăхăнма юратман 2 водителе тытса чарчĕ, административлă протоколсем çырчĕ, водитель прависĕр çула тухнă виçĕ машинăна та штраф лаптăкне вырнаçтарчĕ.

Мĕн пулать-ха капла? Çул-йĕр шӳте юратмасть. Эпир вара... Автоçулсем çинче анлă вăрçă пыни шухăшлаттармасть-и вара?! Водительсене те, вĕсемпе ларса пыракансене те килĕсенче çывăх çыннисем кĕтеççĕ. Манас марччĕ çакна.

Çулсем çинчи йĕркелĕх патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчи инспекторĕсем тăрăшнипе çеç туллин пурнăçа кĕреймест. Ку ĕçре пурте пĕрле тăрăшни кирлĕ.

**Симĕс ĕç çи**

# «Геройра» выльăх апатне çĕнĕлле хатĕрлеççĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

– Икĕ пушар машини те стройра. Талăкĕпех дежурство йĕркеленĕ. – Водительсен окладчĕ те пĕчĕкех мар, 6,5 пин тенкĕ, - малалла паллаштарать Ростислав Николаевич.

Çаксем йăлтах асăннă хуçалăхра ĕç условийĕсем пурри, ĕçлесе илмелли условисем те туса хуни çинчен калать. Пахалăхлă выльăх апатне хатĕрлесси те çакăнпах çыхăннă. Продуктивлăх ӳссен, ферма ĕçченĕсен те ĕç укçи хĕлле те япăх мар пулмалла.

Кун пирки вара кунта халех шутлаççĕ. Ростислав Николаевич тата 400 килограмм пропионовăй кислота туянас кăмăллă. Вара утă та пысăк пахалăхлă пулĕ, тырра та чĕрĕллех йĕркеллĕ упрама май парĕ çав органикăлла кислота.

– Тем пекех утă хатĕрлемеллечĕ халь тата. Органикăлла кислоталлă препарата илсе килейменни чарса тăрать. Фирминче пĕтнĕ вăхăт пулчĕ, – пăшăрханчăклăн сăмах хушрĕ ертӳçĕ.

Асăннă препарата илсе килме район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Чулхула облаçĕнчи фирмăпа çавăн чухнех калаçса татăлчĕ. Эрне кун вар «Геройра» районти пĕтĕм ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем пуçтарăнчĕç, çӳлерех асăннă консервантпа усă курса выльăх апатне мĕнле хатĕрленипе паллашрĕç. Çакăн хыççăн районти ытти хуçалăхсенче те пахалăхлă выльăх апачĕ хатĕрлеме пуçласса, фермăсенче продуктивлăх ӳсессе шанас килет. Мĕншĕн тесен паян аякран килсе такам лайăх пурнăç туса парасса кĕтсе ларни пире йывăрлăхран туртса кăлараймен ĕçсемшĕн Президент та, нимĕнле политика та айăплă мар пулĕ. Пурнăçри ăнăçу хамăртанах килет. Пĕр пек условисенчех ав силоса «Геройсемсĕр» пуçне «Свободăпа» «Ударник» хатĕрлеççĕ. Ильич яч. хис. хуçалăхпа «Волга» сенаж , «Восток», «Оринино», «Ударник», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем утă хатĕрлеççĕ. Ыттисене хальлĕхе çанталăк чăрманнине ăнланмалăх вăхăт пулчĕ. Çак симĕс ĕç ĕç тĕслĕхĕ те çакнах çирĕплетрĕ. Çумăрĕ «Геройра» та, выльăх апачĕ хатĕрлеме пуçламан ытти хуçалăхсенче те çăвать. Хĕвелĕ те пĕр пекех пăхать пирĕн çине. Хамăр туса çитемантарать-ха. Вăл лайăхланасса та, хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсем симĕс ĕç çие çĕнессе те, малта пыракан технологипе усă курасса та шанас килет.



А.Е. Ефимов хăйĕн пулăшаканĕпе А.Н. Яшковпа.

**Л. ПАВЛОВА.**